27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ [illegible] пус.

1944
ДЕКАБРЬ
17
ВЫРСАРНИКУН
246(6741) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Халăх хушшинчи санитари пропаганди ҫинчен

Пирĕн ҫĕршыври медицина работникĕсем хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пĕлӳлĕхне халăх сывлăхне сыхлас ĕҫе параҫҫĕ. Врачсемпе фельдшерсен, сестрасен, санитаркăсен пархатарлă ĕҫĕ медицина работникĕсем умĕнче тăракан задачăсене вăрҫăн йывăр условийĕсенче те ăнăҫлăн пурнăҫа кĕртсе пыма, совет халăхне ерекен чирсенчен сыхласа хăварма тата вăл чирсене пĕтерсе пыма майсем те туса пачĕ.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕҫре санитари пропагандипе агитацийĕ пысăк вырăн йышăнса тăраҫҫĕ. Предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче санитари тĕлĕшĕнчен ҫирĕп йĕркелĕх тăвасси, медицина учрежденийĕсен ĕҫне лайăхлатасси, ерекен чирсем сарăлнине хирĕҫ кĕрешесси, — ҫак ĕҫсене пурнăҫа кĕртесси санитари пропагандипе агитаци ĕҫне кирлĕ пек организациленинчен тата ҫав ĕҫе ĕҫҫыннисен анлă массине явăҫтарнинчен нумай килет. Апла пулсан, санитари пропагандипе агитаци ĕҫĕ халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе пурнăҫа кĕртмелли задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Санитари пропагандине лайăх организацилемен ҫĕрте халăха медицина тĕлĕшĕнчен пулăшассине те кирлĕ пек йĕркелеме ҫук. Вăрҫă вăхăтĕнчи ĕҫсем ҫавна лайăх ҫирĕплетсе параҫҫĕ.

Елчĕк районĕнчи больница вăрҫă ҫулĕсенче халăх хушшинче санитари пропагандине вăйлатассишĕн сахал мар ĕҫленĕ. Больницăри врачсемпе сестрасем, колхозниксем патĕнче час-часах пулса, медицина ыйтăвĕсемпе калаҫусем ирттернĕ. Унсăр пуҫне, санитари инструкторĕсем валли семинарсем организациленĕ. Вĕсем, санитари инструкторĕсемпе уполномоченнăйĕсем ҫине таянса ĕҫлесе, ерекен чирсенчен сыхланмалли мероприятисене пурнăҫа кĕртнĕ: 56 ялти урамсене тасатнă, колхозсен пĕрлешӳллĕ 156 килкартине, колхозниксен 7.215 килҫурчĕсене тасатнă. Ҫăлсене тасатас тĕлĕшпе сахал мар ĕҫсем тунă. Ачасен сывлăхне тĕрĕслес тата вĕсене чирсенчен сыватас енĕпе тимлĕн ĕҫленĕ. Ҫак ĕҫсене пула ерекен чирсем сарăлассине пĕтернĕ, чирлисене сыватас ĕҫе лайăхлатнă.

Калас пулать, республикăри ытти районсенчи больницăсем те ҫавăн пек ĕҫлеме пултарнă. Санитари пропагандине Елчĕк районĕнчи больница пек йĕркелесе пыма пур районсенче те условисемпе майсем ҫителĕклĕ таранах пур. Анчах та хăшпĕр районсенче санитари пропагандине организацилесси ҫине тивĕҫлипе ҫавăрăнса пăхмаҫҫĕ. Участоксенчи врачсен кăҫал сентябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ республикăри съезчĕ хăшпĕр районсенче, уйрăмăнах Элĕк, Етĕрне, Кувакино районĕсенче, трахомăпа кĕҫĕ, сив чир, туберкулез тата ытти чирсене хирĕҫ ҫителĕксĕр кĕрешнине палăртнă. Вăл районсенче съезд хыҫҫăнхи вăхăтра та татăклă улшăнусем туман. Ку ĕнтĕ, чи малтанах, халăх хушшинчи санитари пропагандипе агитаци ĕҫне тивĕҫлипе хакламаннинчен килет.

Санитари пропагандипе агитаци ĕҫне организацилес ĕҫри ҫитменлĕхсенчен пĕри вăл—санитари пропагандине халăх сывлăхне сыхлас ĕҫсене пăхăнтарса йĕркелеменни пулать. Медицина ыйтăвĕсемпе пулса иртекен калаҫусемпе лекцисене тата докладсене час-часах вырăнти условисемпе ҫыхăнтармаҫҫĕ. Акă, тасалăхпа тирпейлĕх ыйтăвне илер. Пуриншĕн те паллă, чирсенчен сыхланас тĕлĕшпе ӳт-пĕве таса тытни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах та ку енĕпе пирĕн сахал мар ĕҫлемелле-ха. Сĕнтĕр, Муркаш тата ытти хăшпĕр районсенче мунчасем сахал. Сăмахран, Муркаш районĕнчи Ҫатракасси ялсоветĕнчи виҫĕ колхозра та пĕр мунча кăна. Вăл та пулин ĕҫлемест. Район центрĕнче те мунча ҫук. Кирлĕ чухне вара шкул мунчипе кăна усă курма пултараҫҫĕ. Апла пулин те, районри партипе совет организацийĕсем тата медицина работникĕсем ҫав ыйтăва кирлĕ пек ҫĕклемеҫҫĕ. Тĕрĕссипе илсен, колхозсенче пĕрлешӳллĕ мунчасем ҫителĕклĕ тăвас ыйтăва ҫывăх вăхăтрах татса пама пулать. Тельман ячĕпе тăракан колхоз пĕрлешӳллĕ мунча тума пултарнă пулсан, ытти колхозсен мунча тума мĕн ҫитмест-ха?

Санитари ĕҫне лайăхлатма колхозниксемпе рабочисен тата служащисен килĕсенче, предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче тасалăхпа тирпейлĕх тунинчен тытăнмалла. Ҫак ĕҫ ҫине чылай ҫĕрте медицина работникĕсем те, партипе совет тата комсомол организацисен руководителĕсем те ҫавăрăнса пăхмаҫҫĕ-ха. Чылай колхоз правленийĕсенче, фермăсен ҫуртĕсенче тата ытти хăшпĕр учрежденисенче тасалăхпа тирпейлĕх ҫук. Ҫапах та вăл колхозсемпе учрежденисен руководителĕсем тирпейлĕх тăвасси ҫинчен сахал шутлаҫҫĕ. Колхоз правленийĕнче, учреждени тасалăх пулмасан, санитари йĕркисене пăхăнасси ҫинчен калаҫни те усăсăр пулнă пулĕччĕ.

Санитари пропагандине организацилессишĕн сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕҫлекен органсемпе медицина учрежденийĕсем ответлă пулса тăраҫҫĕ. Санитари пропагандине санитари инспекторĕсем кăна туса пырасси ҫине шанса тăмалла мар, вăл ĕҫе кашни врач, фельдшер, сестра активлăн хутшăнмалла. Вĕсен хăйсен кулленхи ĕҫĕпе ĕҫҫыннисене типтерлĕ пулма, чир-чĕрсенчен сыхланма, тасалăха пăхăнма вĕрентсе пымалла.

Санитари культурине ҫӳллĕ пусăма ҫĕклес тĕсен, медицина работникĕсен ĕҫĕ кăна ҫителĕксĕр. Хуласемпе ялсенчи культура работникĕсен — учительсен, агрономсен, вулав ҫурт заведующийĕсен, ялсовет тата колхоз председателĕсен, агитаторсен, пропагандистсен, — ҫаксен пурин те санитари пропагандине туса пыма пулăшмалла. Халăх сывлăхне сыхласси—паха та кирлĕ ĕҫ. Ҫавăнпа та вăл ĕҫе куллен, тимлĕн туса пымалла.

Санитари пропагандине анлăн сарса пыни ĕҫҫыннисен пурнăҫпа ĕҫ условийĕсене лайăхлатма, ерекен чирсене пĕтерме, ĕҫҫыннисен сывлăхне ҫирĕплетме пулăшать. Медицина работникĕсен тата партипе совет организацийĕсен ҫакăн ҫинчен яланах асра тытмалла.

В. П. Чкалова асăнса ирттернĕ вечер

Декабрĕн 14-мĕшĕнче офицер-летчиксен Тĕп Ҫуртĕнче пирĕн вăхăтри аслă летчик В. П. Чкалов вилнĕренпе 6 ҫул тултарнине асăнса вечер туса ирттернĕ.

Вечера Отечественнăй аслă вăрҫăра чапа тухнă летчиксем пухăннă. Чкалов пурнăҫĕпе унăн паттăр ĕҫĕсем ҫинчен Совет Союзĕн Геройĕ А. В. Ляпидевский доклад туса панă. Генерал-лейтенант А. А. Игнатьев, СССР халăх артисчĕ С. М. Михоэлс, журналистсем т. ыт. те Чкалова аса илсе сăмахсем тухса каланă.

Юлашкинчен пысăк концерт пулса иртнĕ, унта искусствăсен пысăк мастерĕсем хутшăннă. (ТАСС).

Колхоз ҫамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ умĕн

Ҫамрăксен чи юратнă спорчĕ

Иртнĕ хĕлре эпир ҫамрăксене йĕлтĕрпе ҫӳреме вĕрентес тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫленĕ. Уйрăмăнах йĕлтĕрлĕ ăмăртăва вăхăтра хатĕрленме тытăнман, ăмăрту пахалăхĕшĕн те тăрăшман, вырăнтах йĕлтĕрсем тăвассине анлăн организацилемен.

Ҫав ҫитменлĕхсене шута илсе, кăҫал хĕл пуҫланнсанах йĕлтĕр спортне анлăн сарассишĕн тимлĕн ĕҫе тытăнтăмăр. Чи малтанах, эпир районри йĕлтĕрсен хисепне шута илсе тухрăмăр. Паянхи куна пирĕн пурĕ 1.107 мăшăр йĕлтĕр пур. Вăл шутран коллективпа усă курмаллисем—747 мăшăр, харпăрхăй усă курмаллисем — 360 мăшăр шутланаҫҫĕ. Кунсăр пуҫне, вырăнтах йĕлтĕрсем тăвассине йĕркелерĕмĕр. Комсомолецсемпе ҫамрăксем хăйсенкилĕсенче 165 мăшăр йĕлтĕр тунă. Ҫак кунсенче Вăрмансĕктерти хăма ҫуракан заводра 200 мăшăр йĕлтĕр туса кăлараҫҫĕ. Районра 20 ҫĕрте йĕлтĕр базисене тунă, кусса ҫӳрекен базăсем 3 пур.

Халĕ районра колхоз ҫамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленес ĕҫ пырать. Ку ĕҫе эпир физкультура активне, обществăллă инструкторсене явăҫтартăмăр. Ҫавăн пекех партипе совет тата обществăллă организацисем те тивĕҫлĕ пулăшу параҫҫĕ.

Колхоз ҫамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне ирттерме 9 ҫынтан оргкомитет суйларăмăр. Ăмăртăва ирттерес ĕҫе пĕтĕмпех вĕсем ертсе пыраҫҫĕ. Вĕсем ăмăрту ирттермелли вырăнсене палăртнă ĕнтĕ. Пурĕ 11 кустра ăмăрту пулса иртмелле.

Ҫамрăксене йĕлтĕрпе ҫӳреме вĕрентес тĕлĕшпе районра 54 команда организациленĕ. Вăл шутран 15-шĕ 30 сехетлĕ программа тăрăх, ыттисем 20 сехетлĕ программа тăрăх вĕренеҫҫĕ. Вăл командăсенче вĕрентме обществăллă инструкторсем (пурĕ 32 ҫын) уйăрнă. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне татах 55 обществăллă инструктор вĕрентсе хатĕрлетпĕр. Ку ĕҫре пире шкулсенчи военруксем пысăк пулăшу параҫҫĕ. Сăмахран, Ишлей вăтам шкулĕнче (военрук Кудашов) 20 инструктор, Ишек вăтам шкулĕнче (военрук Трепиев) 15 инструктор, Хыркассинчи ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкулта (военрук Емельянов) 5 инструктор вĕрентсе хатĕрлеҫҫĕ.

Чылай колхозсенче йĕлтĕрҫĕсен командисен занятийĕсене ВЛКСМ пуҫламĕш организацисен секретарĕсем ертсе пыраҫҫĕ. «20 лет Чувашии» колхозри команда, ВЛКСМ организацин секретарĕ Ядакова ертсе пынипе, 20 сехетлĕ программа тăрăх виҫĕ заняти ирттернĕ те ĕнтĕ. Ҫавăн пекех «Знамя победы», «Прожектор» колхозсенче те йĕлтĕрпе ҫӳреме вĕрентес ĕҫ лайăх пырать.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче спортăн хĕллехи сезонĕ уҫăлать. Ҫав кун районра йĕлтĕрлĕ ăмăрту пулса иртет. Шкулсенче хĕллехи каникул пуҫлансан, шкул ачисен ăмăртăвне ирттерме палăртнă.

Н. КУЗНЕЦОВ,
ВЛКСМ Ишлей райкомĕн секретарĕ.

Совет радиовещанийĕ 20 ҫул тултарчĕ

Ҫирĕм ҫул каярах Совет Союзĕнче анлă радиовещани пуҫланса кайнă. Радиона шухăшласа кăларакан аслă ученăйĕ А. С. Попов шухăшласа кăларнă. Пирĕн ҫĕршывра радио сарас тĕлĕшпе ăнăҫлă ĕҫсем ытти ҫĕршывсенчен маларах пуҫланса кайнă.

Радио техникăллă ҫыхăнура кăна мар, массăсемпе ҫыхăнса тăрас ĕҫре те, агитаци ĕҫĕнче те пысăк вырăн йышăнассине чи малтан Ленинпа Сталин кăтартса панă. Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин пирвайхи кунĕсенчен пуҫласах совет радиостанцийĕсем Ленинăн халăха чĕнсе каланă радиограммисене пама пуҫланă. 1919 ҫулăн вĕҫĕнче ятарласа тунă радиотелефон станцийĕ урлă радиопа сăмах калас тĕлĕшпе опытсем тума пуҫланă. Ленин, ҫав тери малалла курма пĕлсе, ун чухнех радиовещание хутсăр тата инҫене хăвар ҫитме пултаракан хаҫат тесе хакланă. Владимир Ильич сĕннипе радиостроительствăн анлă программине йышăннă, радио саракан пысăк станци тума пуҫланă. 1922 ҫулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче ҫав станци урлă концерт панă. Вăл концерта пирĕн ҫĕршывăн тĕрлĕ кĕтессисенче тата ют ҫĕршывсенче те итленĕ.

1924 ҫулăн вĕҫĕнче ҫĕршывра радиовещани ĕҫне анлăн сарас шутпа ятарласа государствăн уйрăм организацине туса хунă.

Радио ĕҫне Сталин юлташ та тивĕҫлипе хакланă. 1927 ҫулта партин 15-мĕш съездĕнче тунă докладра, массăсен культурлăхне хăпартас ĕҫре радиопа кино паллă вырăн йышăнса тăнине кăтартса, вăл ҫапла каланă: «Чăнах та, ҫав паллă хатĕрсене мĕншĕн-ха алла илес мар, мĕншĕн ҫав ĕҫе чăн-чăн большевиксенчен чи пултаруллă ҫынсене, ĕҫе ăнăҫлăн малалла яма пултаракан ҫынсене суйласа илсе лартас мар». Парти ялан тăрăшса ĕҫленипе пирĕн ҫĕршывра радиовещани ĕҫĕ вирлĕ сарăлса кайрĕ. Ленин радиона хутсăр хаҫат тесе каланă шухăшсем пурнăҫа кĕчĕҫ. Совет ҫыннисен пурнăҫне радио ҫирĕппĕн кĕрсе вырнаҫрĕ. Пирĕн ҫĕршывра Мускавран тата ытти хуласенчен паракан сăмахсене кĕвĕсене итлеме темиҫе миллион установка пур. Радио тăрăх столицăран панă хыпарсене часах пĕтĕм ҫĕршыв пĕлет. Радиоустановкăсем хуласемпе район центрĕсенче, темиҫе пин колхозпа ялсовечĕсенче, совхозсемпе МТС-сенче, карапсемпе поездсем ҫинче тата фронтра та ĕҫлеҫҫĕ. Политикăллă паха передачăсем вăхăтĕнче пĕтĕм ҫĕршыв итлемелли хатĕрсем патне пырса тăрать.

Совет радиовещанийĕ СССР-ти халăхсен 70 ытла чĕлхипе тата ют ҫĕршывсенчи халăхсен 28 ытла чĕлхипе пулса пырать. Мускавран паракан центральнăй вещани кăна талăкра 88 сехет хушши вăхăт йышăнать. Кунсăр пуҫне, республикăсенчи, крайсемпе облаҫсенчи радиокомитетсем — 126 радиокомитет радиопа парса тăраҫҫĕ. Хуласенче, районсенче тата предприятисенче 2.000 ытла радиовещани редакцийĕсем ĕҫлеҫҫĕ, хăйсен передачисенче вĕсем вырăнти пурнăҫа ҫутатса параҫҫĕ. Радио ĕнтĕ информаци ĕҫĕнче чи массăллă, чи оперативнăй меслет пулса тăчĕ. Передачăсенче агитацин, пропагандăн тата искусствăн тĕрлĕрен формисемпе усă кураҫҫĕ.

Отечественнăй аслă вăрҫă вăхăтĕнче радио уйрăмăнах паллă вырăн йышăнчĕ. Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕсене, Верховный Главнокомандующин приказĕсене, Хĕрлĕ Ҫарăн ҫĕнтерĕвĕсене палăртса Мускавран паракан салютсене пĕтĕм тĕнче итлет. Радио тăрăх фронтра, ҫĕршывра тата ют ҫĕршывсенче пулса иртекен паллă событисем ҫинчен анлă информаци парса тăраҫҫĕ. Пĕр Мускавран кăна куллен юлашки хыпарсен 14 кăларăмне параҫҫĕ.

Передачăсене пĕр-пĕр ĕҫ пулса иртнĕ вырăнтан тӳрремĕнех парасси—радио-репортаж пысăкрах та пысăкрах вырăн йышăнма пуҫлать. Час-часах фронтăн малти линийĕнчен, аэродромсенчен, танк чаҫĕсенчен трансляцисем пулса иртеҫҫĕ. Радио тăрăх тăтăшах пропагандистла тата наукăлла калаҫусем параҫҫĕ. Отечественнăй аслă вăрҫăн пирвайхи кунĕсенчен пуҫласах фронта ҫырусем ярас тата фронтран ҫырусем илес ĕҫе йĕркеленĕ. Пĕтĕм Союзри радиокомитет виҫĕ ҫул хушшинче 2 миллиона яхăн ҫыру илнĕ. Вĕсем вăрҫăн хăрушă кунĕсенче темиҫе миллион совет патриочĕн шухăш-кăмăлĕсене палăртса тăракан чи паха документсем пулса тăраҫҫĕ.

Ачасене воспитани парас тĕлĕшпе те, вĕсен вĕренĕвĕпе канăҫне организацилес тĕлĕшпе те радиовещани паллă вырăн йышăнать. Калаҫусемпе литературăллă передачăсемсĕр пуҫне, ача-пăчасем валли паракан программăсенче информаци, музыка тата театр постановкисем паллă вырăн йышăнаҫҫĕ.

Театрсемпе радиостудисенчен паракан спектакльсемпе концертсене темиҫе пин километрта ларакан хуласемпе пĕчĕк ялсенче темиҫе миллион ҫын итлет. Радиопа усă курса, темиҫе миллион ĕҫҫынни музыка культурин чи лайăх произведенийĕсемпе паллашса пыраҫҫĕ. Микрофон умне тухман паллă пĕр исполнитель те, пĕр музыка коллективĕ те ҫук. Сасса ҫырса илме май пуррине пула, радиовещани репертуарĕ мĕнпур театрсемпе концерт организацийĕсен репертуарĕнчен те нумай анлăрах. Акă, сăмахран, Мускавран кăҫал кăна музыкăллă 6.000 ытла произведени панă.

Литература передачисенче мĕнпур писательсемпе поэтсен произведенийĕсене те вуласа панă, ҫавăн пекех микрофон умĕнче каламан пĕр чаплă артист та, пĕр вулакан та юлман. Драма театрĕсен чи лайăх спектаклĕсене пурне те е пĕтĕмпех, е монтажсем туса, е уйрăм вырăнсене илсе радиопа панă.

Совет Союзĕн Геройĕсем тата Социализмлă Ĕҫ Геройĕсем калаҫусемпе лекцисем вуласа параҫҫĕ. Час-часах совет тата парти организацийĕсен руководителĕсем, ученăйсемпе писательсем микрофон умне тухса калаҫҫĕ. Темиҫе вунă пин рабочи, колхозниксем, интеллигентсем радио корреспонденчĕсем пулса тăраҫҫĕ.

Радиовещанипе пирĕн ҫĕршывра питех те интересленеҫҫĕ. Ялсенче ĕҫ кунĕ иртнĕ хыҫҫăн ҫынсем час-часах темиҫе километрта ларакан вулав ҫуртне е ялсоветне радиопа ҫĕнĕ хыпарсем итлеме ҫӳреҫҫĕ.

Вăхăтлăха нимĕҫсем тытса илнĕ районсенче Мускавран радиопа калани совет ҫыннисем оккупантсене хирĕҫ активлăн кĕрешессине организацилес ĕҫре пысăк пулăшу панă. Вилĕмлĕ хăрушлăхран хăраса тăмасăр, совет ҫыннисем Мускаври радиостанцисен передачисене итлеме тăрăшнă. Мускавран килекен сăмахсем эпир ҫĕнтересси шантарнă, паттăрлăхпа хаюлăх панă.

Совет радиовĕн вăйне, вăл халăха мĕнле савăрнине лайăх пĕлсе тăракан нимĕҫсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсенчен каялла чакнă чухне радио тавраш пĕтĕмпех иркатса хăварнă. Нумай вырăнсенче нимĕҫсем хăйсем тухса тарас умĕн халăх хушшинчи репродукторсене пухса ҫунтарса янă. Халĕ ĕнтĕ ирĕке кăларнă районсенче радиовещани ҫĕнĕрен пуҫланать.

Партипе правительство совет радиовещанине аталантарас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕҫсем тăваҫҫĕ. Ҫирĕм ҫул хушшинче радио пирĕн агитаципе пропагандăра, совет ҫыннисен идейисемпе культурине хăпартас тĕлĕшпе питĕ хăватлă меслет пулса тăчĕ. Тунă ĕҫсем чăнахах та пысăк та анлă. Анчах радиовещани работникĕсен ответлăхĕ те пысăк. Пирĕн алăри майсемпе пурнипе те ҫителĕклĕн усă курни ҫук-ха. Центрти, пуринчен те ытларах вырăнти радиовещани пахалăхне тивĕҫлипе ӳстерес пулать. Вырăнти радиокомитетсен передачисем час-часах итлекенсен кăмăлне тултараймаҫҫĕ, совет тылĕн паттăр ĕҫĕсене ҫителĕклĕ таран ҫутатса памаҫҫĕ, радио итлекенсене вĕсем малалла ӳсе пырас ĕҫре кирлĕ таран пулăшмаҫҫĕ. Районри радиовещани те пысăкрах та пысăкрах вырăн йышăнса пырать. Ҫавăнпа та партипе советăн вырăнти организацийĕсем районри радиовещание нумай пулăшмалла. Пирĕн передачăсем пурте тарăн шухăшлă пулччăр, радио итлекенсене интереслентерччĕр, вĕсен тавракурăмне аслăлатса пычăр.

Радиотехника тĕлĕшпе те, радиоточкăсен хисепне ӳстерес тĕлĕшпе те пирĕн умра пысăк задачăсем тăраҫҫĕ. Радиоузелсемпе трансляци пункчĕсене вырăнти организацисен тата общественноҫăн куллен сăнаса пымалла.

Ҫирĕм ҫул хушшинче радиовещанире пысăк опыт пухăнчĕ. Ҫав опытпа туллин усă курмалла. Агитаципе пропаганда ĕҫĕнче, тăшмана тĕппипех ҫĕнтерес ĕҫе совет халăхне мобилизацилес ĕҫре радио тата вăйларах меслет пулса тăтăр.

Г. КАЗАКОВ.

Ҫуракине большевикла кĕтсе илер!

Ҫитес ҫулта та ăмăртса ĕҫлетпĕр

Комсомольски районри «Трактор» колхоз кăҫал кашни гектартан вăтам шутпа 15,7 центнер тĕштырă туса илчĕ. Государствăна тырă памалли кăҫалхи обязательствăна тултарнă хыҫҫăн 1945 ҫулшăн 517 центнер патăмăр. Пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те тултарнă. Кашни сысна аминчен 12 ҫăвăр илсе ҫитĕнтернĕ. пăрусем ӳстермелли плана 125 процент, путексем ӳстермелли плана 110 процент тултарнă. Кашни сăвакан ĕнерен вăтам шутпа 1245 литр сĕт илнĕ.

Иртнĕ ялхуҫалăх ҫулĕнче пирĕн колхоз «Комбайн» колхозпа ăмăртса ĕҫлерĕ, эпир ăмăртура чылай енĕпе мала тухрăмăр. Ăмăрту итогĕсене колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-яврăмăр. Нумай колхозниксем ун чухне сапла каларĕҫ: ялхуҫалăх ĕҫĕсенче каличчен тунă ҫитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар, социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сармалла. Ҫĕнтерӳ сехетне ҫывхартассишĕн, мухтавлă Хĕрлĕ Ҫара апат-ҫимĕҫ, промышленноҫа — чĕртавар ытларах парассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле, терĕҫ.

«Трактор» колхоз членĕсем, 1945 ялхуҫалăх ҫулĕнче те ăмăртса ĕҫлеме пулса, ҫакăн пек обязательствăсем илчĕҫ: кашни гектартан вăтам шутпа 16,5 центнер тĕштырă, 120 центнер ҫĕрулми туса илмелле. Ҫитес ҫуракине пур енчен те лайăх хатĕрленмелле. Мĕнпур агротехникăллă мероприятисене кăтартуллăн пурнăҫламалла.

Колхоз фермисенчи мĕнпур выльăхсене ҫуркуннене мăнтăр кăлармалла, ҫамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрамалла.

Пирĕн колхозри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăҫласа пыраҫҫĕ. Вăрлăх фондне пĕтĕмпех хывса ҫитерне. Тĕштырăсен вăрлăхĕсене сортласа тасатса хунă тата акт ҫырса кладовщик аллине панă. Вăрлăхсен шăтаслăхне тĕрĕсленĕ. Пăрса йышши тырăсене алăпа суйлас ĕҫе организацилерĕмĕр.

Ҫавăн пекех колхозра ялхуҫалăх машинисемпе ут таврашсене, кӳлсе ҫӳремелли инвентарьсене юсас ĕҫ лайăх пырать. Вырăнти удобренисене хатĕрлеме тата тислĕке уя кăларма пуҫăнтăмăр. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне уя 1000 лав ытла тислĕк кăларнă. Ялхуҫалăх машинисенчен 4 плуг, пĕр сеялка юсаса лартнă. 10 урапа юсанă тата 33 сӳсмен хатĕрленĕ.

Т. ИВАНОВА,
«Трактор» колхоз председателĕ.

Кашни гектартан 100-шер пăт

КУСЛАВККА. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе «Динамо» ялхуҫалăх артелĕ районра ҫулсеренех мала тухса пырать. Кăҫалхи ялхуҫалăх итогĕсем те ҫавăн ҫинченех калаҫҫĕ.

Вăрҫă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ҫĕнтерсе пырса, колхоз 1944 ҫулхи тырпула кĕске вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пуҫтарса кĕртрĕ. Мĕн пурĕ 371,5 гектар тĕштырă. 36 гектар ҫĕрулми пухса илнĕ. Вăтам хисеппе шутласан, тĕштырăсем гектартан 100-шер пăт, ҫĕрулми—18-шар центнер тухнă.

Уйрăм бригадăсем тата та вăйлăрах тырпул туса илчĕҫ. Акă, 1-мĕш бригада кашни гектартан 101-шер пăт, 4-мĕш бригада —105-шер пăт, 3-мĕш бригада вара — 113-шер пăт тырă туса илнĕ. Уйрăм ҫĕр лаптăкĕсем ҫинче 3-мĕш бригадăн гектартан 166 пăтран та ытларах урпа тухнă.

Ытти колхозсемшĕн «Динамо» ялхуҫалăх артелĕн паха ĕҫĕ, паллах, пысăк урок пулса тăрать. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн председателĕ Ефремов юлташ ВКП(б) райкомĕн ҫак кунсенче пулса иртнĕ XV-мĕш пленумĕнче кăҫалхи ялхуҫалăх итогĕпе ҫитес ҫулхи ҫуракине хатĕрленесси ҫинчен сӳтсе-явнă чухне ҫакна питех те вырăнлă каларĕ:

— Ҫĕре, акнă тырпула агротехника кăтартса пынă пек пăхса усрасан тата ĕҫе тĕрĕс организацилесен, — тăпра колхознике нихăҫан та кӳрентерес ҫук, вăл яланах тухăҫлă тырпул парать.

Чăнахах та, кăҫал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе колхоз питĕ пысăк ĕҫ туса ирттернĕ. Вăл уя 6.863 лав тислĕк, 168 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 100 центнер кĕл, 67 центнер фекали кăларнă. 6.62 гектар ҫинче ҫерем ватнă. Ана лайăх кăпкалатас тесе, колхозниксем ятарласа тунă кĕреҫе-кĕреплесемпе ĕҫленĕ. Ҫак асăннă лаптăкра вара кашни гектартан 172 пăт тырă пухса илнĕ.

Ҫитес ҫулхи вăйлă тырпул никĕсне хывас енĕпе «Динамо» колхоз пысăк хавхаланупа ĕҫлет. Тимĕрҫĕ лаҫҫинчен юсанса тухакан машинăсене шанчăклă склада лартаҫҫĕ. Вăрлăх фончĕ валли хăварнă тырпула алласа тасатасси пысăк тимлĕхпе пулса пырать. Иртнĕ ҫуркуннехи пекех, кăҫал та вăрлăхсене кондицие лартас енĕпе колхозниксем ăмăртса ĕҫлеҫҫĕ.

«Динамо» ялхуҫалăх артелĕн ĕмĕчĕ—ҫитес ҫулта кăҫалхинчен те вăйлăрах тырпул туса илесси пулса тăрать. Ырă ĕмĕте пурнăҫлассишĕн вĕсем хушшинче ĕҫри хастарлăх кунсеренех ӳссе пырать.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Тăрăшса ĕҫлени сая каймарĕ

ЕЛЧĔК. Ҫĕнĕ Пăвари «Сатурн» колхоз членĕсем, иртнĕ ҫулхисемпе танлаштарсан, кăҫал нумай лайăхрах ĕҫлерĕҫ. Тырпулсене вăхăтра вырса пухрĕҫ, Октябрь уявĕ ҫитиччен авăн ҫапса пĕтерчĕҫ. Вĕсем кăҫал вăйлă тырпул туса илчĕҫ.

Колхозниксем тăрăшса ĕҫлени ахаль сухалмарĕ. Вĕсем халь кашни ĕҫкунĕ пуҫне килограмм ҫуршар тырă илчĕҫ. Колхозра ытларах тăрăшса ĕҫленĕ колхозниксем Поликарп Курчин, Марфа Курчина, Пантелеймон Воробьев 74—76-шар пăт тырă илчĕҫ.

М. ЕГОРОВ.

Кашни вĕллерен 44-шар килограмм пыл

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Липовка колхозĕн 1-мĕш утарĕнче ĕҫлекен И. Иванов юлташ хăй ĕҫне тимлĕн туса пырать. Утарта пурĕ 80 вĕлле. Кăҫал вăл кашни вĕллерен 44-шар килограмм пыл илнĕ.

(«Коммунар»).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем Венгрире МИШКОЛЦ хулинчен ҫурҫĕртерехре тата ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре СЕНДРЬО хулипе чугун ҫул станцине тытса илнĕ, ҫавăн пекех тата, тăшманпа ҫапăҫса, халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ТАЛЛИА, ГЕРНАД-КЕРЧ, БЕРЕТ, БАКТА, ГАДЬ-БАТОР, СУХОДЬ, РУДАБАНЬЯ, НИАРАД, ШАЙО-ВЕЛЕЗД, БАНФАЛВА, ТАРДОНА, МАЛЬИНКА ялĕсем тата ТАЛЛИА чугун ҫул станцийĕ.

БУДАПЕШТ хулинчен ҫурҫĕртерехре пирĕн ҫарсем Чехословаки ҫĕрĕнчи ШАХЫ хулине туртса илнĕ.

Декабрĕн 14-мĕшĕнче Венгри ҫĕрĕнче МИШКОЛЦ хулинчен ҫурҫĕртерехри районра пулса иртнĕ ҫапăҫусенче пирĕн ҫарсем нимĕҫсемпе венгерсен 1.015 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса ҫӳренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн ҫапăҫнă.

Декабрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн ҫарсем нимĕҫсен 15 танкне ҫĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри ҫапăҫусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Венгрире Мишколц хулинчен ҫурҫĕртерехре тата ҫурҫĕр-хĕвелтухăҫнерехре пирĕн ҫарсем ҫаплах малалла куҫса пынă. Нимĕҫсен Бодва шывĕ ҫинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕшĕн—Сендрьо хулишĕн хаяр ҫапăҫусем пулса иртнĕ. Ҫĕрле пирĕн чаҫсем Сендрьо хулин хĕвелтухăҫ енчи тата кăнтăр енчи хĕррисенче ҫапăҫма тытăннă. Ҫав вăхăтрах советсен ҫăмăллăн куҫса ҫӳрекен подразделенийĕсем, аякран иртсе кайса, тăшмана ҫурҫĕр енчен пырса ҫапнă. Пирĕн ҫарсем тăшман хирĕҫ тăнине ҫĕмĕрсе тăкнă та Сендрьо хулипе чугун ҫул станцине туртса илнĕ. Тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пирĕн Шайо шывĕ тăрăх наступлени туса пыракан ытти чаҫсем вунă километр малалла кайнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ.

* * *

Будапешт хулинчен ҫурҫĕртерехре пирĕн ҫарсем Ипель шывĕ урлă каҫнă та Чехословаки ҫĕрне кĕрсе кайнă. Шахы хулинчен хĕвелтухăҫнерехре тата хĕвеланăҫнерехре вăйлă ҫапăҫусем пуҫланса кайнă. Тăшман кирек мĕн пулсан та ҫав плацдарма пĕтерсе лартма, пирĕн ҫарсене шыв урлă хăваласа яма тăрăшнă. Тăшман эсэсовецсен штурмовой бригадине тата танковăй чаҫсем васкаса илсе пынă та совет чаҫĕсене хирĕҫ темиҫе хут та контратака тунă. Пирĕн боецсем, тăшман хĕсеннине чарса тăрса, ҫĕнĕ вăйсем пухса пынă, унтан вара нимĕҫсене вăйлăн пырса ҫапнă та Шахы хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Гитлеровецсемпе ҫĕрĕпех хула урамĕсенче ҫапăҫнă. Тул ҫутăлса килнĕ чухне пирĕн ҫарсем нимĕҫсене аркатса тăкнă та тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне—Шахы хулине йышăннă. Ку хула шоссе ҫулĕсемпе чугун ҫулсен узелĕ пулса тăрать. Шахы хулишĕн пынă ҫапăҫусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕҫсен 800 салтакпа офицер ытла вилсе пĕтнĕ. Тăшманăн 13 танкĕпе хăй тĕллĕн ҫӳрекен туппине персе ҫĕмĕрнĕ е ҫунтарса янă.

* * *

Хĕвелтухăҫ Пруссире нимĕҫ пехотин пĕчĕк ушкăнĕсем тĕрлĕ участоксенче пирĕн оборона ăшнелле кĕрсе кайма хăтланнă. Совет подразделенийĕсем тăшмана ҫапаласа янă, гитлеровецсене пĕр ротăна ҫити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн снайперсем кун каҫиччен 70 нимĕҫ салтакĕпе офицерне пĕтернĕ.

Пирĕн бомбардировщиксем, штурмовиксем тата инстребительсем нимĕҫсен фронт патĕнчи ҫулйĕрĕсене пыра-пыра ҫапнă. Совет летчикĕсем Тройбург, Ангербург тата Летцен чугун ҫул станцийĕсем ҫине бомбăсем пăрахнă. Ҫапла, пирĕн авиаци 9 паровоз тата 30 вагон пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуҫне тата чугун ҫул эшелонне вут тивертсе янă, 60 автомашинăна ҫĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Нимĕҫсен 44-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 131-мĕш полкăн 2-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ врач Эгон Тремль ҫапла каласа кăтартнă: «Пирĕн дивизи Итали фронтĕнче тăратчĕ. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче никам кĕтмен ҫĕртен дивизи чаҫĕсене вагонсене лартма тытăнчĕҫ. Дивизие ăҫта ярассине пĕри те пĕлмен. Офицерсем нумайĕшĕ эпир Австрие канма каятпăр пуль тесе шутларĕҫ. Анчах та пире хуйхă пусарса лартрĕ, 44-мĕш дивизие Дунай патне илсе килчĕҫ те ҫул ҫинчен тӳрех вырăссене хирĕҫ ҫапăҫма ячĕҫ. 2-мĕш батальона вырăссемпе тĕл пулнă-пулманах аркатса тăкрĕҫ. Командăй пункт районĕнче эпĕ ҫакăн пек япала куртăм: кăнтăр тĕлĕнче сасартăк — «вырăссем килеҫҫĕ» тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнсе кайрĕҫ. Салтаксем хӳтлĕхсенчен чупса тухрĕҫ те ăҫта килчĕ унта тарма тытăнчĕҫ. Батальон командирĕ Тешнер капитан тата икĕ офицер, хăрата-хăрата, батальонри салтаксен пĕр пайне тытса чарчĕҫ. Тешнер салтаксене ҫухасенчен яра-яра илсе ҫĕре пăрахрĕ, хăш еннe пемеллине кăтартса пачĕ. Ҫав кун эпĕ «персе пăрахатăп» тесе хăратнине хам гурнăҫра чи малтан ҫав тери нумай илтрĕм. Темиҫе кун хушши пынă ҫапăҫусенче 131-мĕшпе 132-мĕш полксем йывăр ҫухатусем тӳсрĕҫ».

Нимĕҫсен 44-мĕш запаснăй полкĕнчен тыткăна лекнĕ врач Пауль Гангль ҫапла каласа кăтартнă: «44-мĕш запаснăй полк Вена хулинче тăракан 177-мĕш запаснăй дивизие кĕрет. Полкра 5 батальон, кашни батальонра 6 рота, вĕсенчен виҫҫĕшĕ запасной ротăсем, виҫҫĕшĕ вĕренекенсем. Нумаях пулмасть 44-мĕш полка васкасах фронта ячĕҫ. Фронта килнĕ чухне ҫул ҫинче 44 салтак ытла тарчĕҫ. Пирĕн полк ытти чаҫсемпе пĕрле вырăссен Дунай хĕрринчи плацдармне пĕтерсе лартса, вырăссене Дунай шывĕн тепĕр енне хăваласа ямалла пулнă. Анчах та эпир темĕн чухлĕ пысăк ҫухатусем тӳсрĕмĕр пулин те, ҫак задачăна пурнăҫа кĕртеймерĕмĕр. Плацдарм районĕнчи ҫапăҫусенче пирĕн полкăн икĕ батальонне пуҫĕпех пĕтерсе тăкрĕҫ».

Осоавиахим организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Осоавиахим организацийĕсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Хăшпĕр колхозсенче, учрежденисенче тата предприятисенче пуçламĕш организацисем вăрçă ĕçне вĕренмелли боевой организацисем пулса тăчĕç.

Шупашкар районĕнчи «Туçи» колхози Осоавиахим организацийĕ пирĕн республикăри лайăх ĕçлекен организацисенчен пĕри шутланса тăрать. Ку колхозри колхозниксемпе колхозницăсем пурте Осоавиахим членĕсем тăраççĕ. Организацире 9 çын ПВХО инструкторĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе колхозниксем колхозницăсем пурте те ПВХО нормисене панă. Халĕ кашни инструктор хăй çумне çирĕплетнĕ участока ĕçлет. Осоавиахимăн пăшал тытма пултаракан членĕсем пурте «Ворошиловский стрелок» значок нормисене панă.

Ку пуçламĕш организацин председателĕ С. Григорьев, взвод командирĕ И. Матвеев тата активлă осоавиахимовецсем И. Филиппов, А. Иванов, А. Павлов, Ф. Константинов, В. Уткин, Н. Григорьев, И. Павлов юлташсем ПВХО ĕçне тата вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе лайăх агитатор-пропагандистсем пулса тăчĕç. Иртнĕ хĕлле организацире противогазсем тăхăнса йĕлтĕрлĕ поход туса иртернĕ. Вăл похода пурĕ 44 осоавиахимовец хутшăннă. Тактикăллă вĕренӳсем 6 хутчен, «Сывлăшран тапăнни» сигналпа 3 тревога туса иртнернĕ. Вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе лекцисемпе калаçусем 53 хутчен иртнернĕ. Осоавиахим организацин совечĕ колхоз çумĕнче оборона çурчĕ уçнă. Унта ПВХО выставки, хаçат-журналсем пур, «Снайпер» ятлă стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать. Кунтах дежурнăй осоавиахимовец-агитаторсем калаçусем иртереççĕ. Осоавиахим членĕсем пуçарнипе кăçал Хĕрлĕ Çар фондне 23 центнер çĕрулми пухса панă. Уйри тыр-пула хурал тăрассине лайăх йĕркеленĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсене вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе уйрăм активист-осоавиахимовецсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă, Шупашкар районĕнчи Осоавиахим райсовечĕн общественник-инструкторĕ В. Кулаев юлташ ПВХО нормине пама 125 çынна, Улатăр хулинчи врач А. Залазинская—400 çынна, А. Батарин (Улатăр хули) — 314 çынна тата 53 çынна общественник-инструктор пулса ĕçлеме вĕрентсе хатĕрленĕ. Элĕк районĕнчи активист-осоавиахимовец З. Кузьмин кăçал боец-стрелоксем пулма 44 çынна вĕрентнĕ, Н. Никифоров юлташ (Шупашкар районĕ) 16 телеграфист, 10 телефонист тата 10 радист, Залазинская юлташ (Улатăр хули) 17 снайпер вĕрентсе хатĕрленĕ.

Ĕççынниcене ПВХО тата вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе Шупашкар районĕнчи Осоавиахим райсовечĕ (председателĕ М. Васильев юлташ) лайăх ĕçлесе пырать. Унта кăçал колхозсемпе предприятисем çумĕнче 60 çĕрте пуçламĕш организацисем çĕнĕрен организациленĕ, 1263 çынна Осоавиахим членне илнĕ, оборона кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли плана 123 процент тултарнă. Фронтовиксен çемьисемпе ачисене пулăшмалли фонда 230 центнер çĕрулми пухса панă. Ку район 9 уйăх хушши ĕнтĕ Осоавиахимăн Чăваш АССР Центральнăй Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытса тăрать.

Оборона кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе Елчĕк районĕнчи Осоавиахим районсовечĕ (председателĕ Д. Климентов юлташ) лайăх ĕçлет. Унта 37 пуçламĕш организацире ялан ĕçлекен формированисем пур. Районра оборона кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли плана 233 процент тултарнă.

Осоавиахим организацийĕсене çĕнĕ членсем хутшăнтарас тĕлĕшпе Вăрнар тата Первомайски районсем лайăх ĕçлеççĕ. Вăл районсенче Осоавиахим членĕсен йышĕ икĕ хут ытла ӳснĕ. Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсене учетпа отчет ĕçне тĕрĕс йĕркелес тĕлĕшпе Улатăр хула совечĕпе Шупашкар районĕ мала тухрĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсене, рабочисемпе служащисене вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе, хамăр тăван çĕршыв оборона вăй-хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен Осоавиахим организацисем пирĕн республикăра çĕршерĕн шутланаççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр районсенче Осоавиахим организацийĕсен ĕçĕсене чăтма çук япăхтарса янă. Акă, Кувакино, Шăмăршă тата Куславкка райсовечĕсене илер. Асăннă районсенче Осоавиахимăн пуçламĕш организацисене ертсе пырас, кулленхи ĕçре пулăшу парас тĕлĕшпе никам та ĕçлемест. Осоавиахим райсовечĕн председателĕсене час-часах улăштарса тăраççĕ. Сăмахран, Шăмăршă районĕнче иртнĕ пилĕк уйăх хушшинче виçĕ председатель, Куславкка районĕнче икĕ председатель улшăннă. Йĕпреç тата Куславкка районĕсенчи райсовет çурчĕсем, ĕçлекенсем çук пирки, 5—6 уйăх хушши çăрапа питĕрĕнсе тăраççĕ. Кувакино районĕнче Осоавиахим райсоветĕнче ĕçлеме 10 уйăх хушшинче те çын тупса парайман. Çĕрпӳ районĕнчи райсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Макаров Осоавиахим ĕçне пĕтĕмпех юхăнтарнă. Кĕске вăхăтрах райсовет укçине 3.600 тенкĕ салатса янă.

Йĕпреç, Ишлей, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Первомайски, Тăвай тата Етĕрне районĕсенче Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕсене çирĕплетес, çĕнĕрен членсем илес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, член укçисене пухмаççĕ. Çавна пула вăл районсенче хăшпĕр пуçламĕш организацисем саланса кайнă, пуррисем те хут çинче çеç шутланса тăраççĕ. Улатăр тата Советски районсенче Осоавиахим организацисенче ĕççыннисене вăрçă ĕçне вĕрентессине çĕнетсе йĕркелемен, оборона значокĕсен нормисене парас ĕçе куллен туса пымаççĕ. Калинино, Шăмăршă, Октябрьски, Первомайски районсенче учетпа отчет ĕçне япăхтарса янă.

Осоавиахимăн пирĕн республикăри организацийĕсем Мари тата Мордва республикисенчи организацисемпе ăмăртса ĕçлеççĕ. 1944 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче эпир çак ăмăртура мала тухрăмăр. Автономиллĕ республикăсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕнче Чăваш республикинчи Осоавиахим организацийĕсем виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Çакă вăл пире лайăхрах ĕçлеме хушать. Осоавиахим райсовечĕсем хăйсен кулленхи ĕçĕнче партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсемпе тачă çыхăнса тăрсан, эпир тата лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр. Осоавиахим организацисен ĕçне тĕпрен лайăхлатса, Осоавиахим Центральный Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешер.

А. НИКИТИН,
Осоавиахимăн Чăваш АССР-ĕнчи Центральный Совечĕн председатель заместителĕ.

Тĕнчери лару-тăру

Хĕрлĕ Çар Венгрире наступлени туса пыни тĕнчери хаçатсене ытларах та ытларах интереслентерет. Нимĕçсен фашистла пропаганди халĕ ĕнтĕ Хĕвелтухăç фронтĕнчи ĕçсем пирки хытă шикленнине пытарма пултараймасть. Украинăри 2-мĕшпе 3-мĕш фронтсен паттăр çарĕсем тăшман оборонине татни нимĕçсем Венгрие тытса тăма пултарас çуккине лайăх кăтартса парать. Гитлерăн юлашки вассалĕн пĕтес кунĕсем çитрĕç.

Хĕрлĕ Çар ăнăçлăн наступлени туса пынипе Будапешт тимĕр хĕскĕч ăшне кĕрсе ӳкет. Пирĕн тăшмансем çав хулана еплерех пысăк вырăна хунине Пал Ваго тухса каланинчен те лайăх курма пулать. (Пал Ваго—Венгрин пуканелле правительствин статс-секретарĕ). «Паян, — кăшкăрать çав Гитлер хӳрешки, — пирĕн столицăн кунçулĕ çинчен ыйту тухса тăрать. Çĕршыври чи паллă çулсем, этем чĕриниче артерисем пухăннă пекех, пирĕн столицăра — Будапештра пухăнса тăраççĕ. Тĕп çул, хĕвеланăçпе хĕвелтухăçнелле илсе каякан çул —Дунай шывĕ—Будапешт витĕр юхать. Пирĕн çĕршыври промышленноçăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ—Будапештра». Венгрин тăнсăр правительсем халĕ çарпа граждансла учрежденисене тата предприятисене Будапештран васкаса илсе тухаççĕ. Салаши «правительстви» тахçанах Будапештран тухса тарнă.

Нимĕçсем Венгрире тӳсекен поражени политикăпа çар тĕлĕшĕнчен гитлеровецсене пысăк инкек кӳме пултарать. Ахальтен мар ĕнтĕ Будапешта Берлина кĕмелли кăнтăр енчи хапха тесе шутлаççĕ. Людендорф 25 çул каярах çапла каланăччĕ: пулас вăрçăра Хĕвелтухăç Европăри фронтра ĕçе татса паракан çапăçу Балатон кӳлли районĕнче пулса иртĕ, тенĕччĕ. Рейтер агентствин çар обозревателĕ каланă тăрăх, Кăнтăр Венгрири фронт халĕ Страсбург районĕнчи Рейн çинчи Хĕвеланăç фронтне Хĕвелтухăç Пруссири Хĕвелтухăç фронтне çитессинчен çывăхрах.

Çакă вăл ак мĕне пĕлтерет: Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынипе пула, союзниксен çарĕсем пур енчен те хупăрласа илнĕ гитлерла Германие пăчăртаса илессин хăвăртлăхĕсем ӳссе пыраççĕ.

Юлашки вассал тухса ӳкнипе «виççĕмĕш импери» политика тĕлĕшĕнчен тăр-пĕччен юласси вĕçленсе çитет. Гитлерла блок çук ĕнтĕ, тесе каласан та йăнăш пулмасть. Халĕ пĕр пĕччен тăрса юлакан фашистла Германин тулашри политики ишĕлсе анни куç умĕнчех.

* * *

Хĕвеланăçĕнче те нимĕçсен оборони япăхланса пырать. Наступлени хăвăртлăхĕсем пăртак чакрĕç пулин те, чылай участоксенче союзниксем малаллах каяççĕ. Союзниксен çарĕсем вăйлăрах хĕсме пуçланине, çапăçусем хаярланса пынине нимĕçсем хăйсем те пытармаççĕ. Сăмахран, Германин Трансоцеан агентствин çар обозревателĕ Серториус çапла пĕлтерет: халĕ, американецсен 1-мĕш армийĕ Дюренăн икĕ енĕле Рур шывĕ патне çывхарнă хыççăн, «Юлих—Линних районĕнче вăйлă наступлени пуçласа ярассине кĕтме пулать. Германи фрончĕ, — тет обозреватель, — çĕнĕрен килсе тухакан йывăрлăха тӳссе иртерме хатĕр пулмалла».

Чăнах та, гитлеровецсене пысăк йывăрлăхсем кĕтсе тăраççĕ. Линниха йышăнса Рур шывĕ урлă каçнă союзниксем тăшмана хытăрах та хытăрах тапăнаççĕ. Çапла вара, союзниксем Кельн еннелле татăклăн пырса çапма хатĕрленеççĕ. Саар облаçĕпе Пфальц таврашĕнче американецсен 3-мĕшпе 7-мĕш армийĕсем пĕрлешсе вăйлă наступлени туса пыраççĕ. Страсбург хулинчен кăнтăралла тата Мюлузран çурçĕрелле наступлени туса пырса, союзниксен çарĕсем нимĕçсен 19-мĕш армине çавăрса илесшĕн.

Пуринчен ытла нимĕçсем резерв çитменнипе шикленеççĕ. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронт, ĕлĕкхи пекех, Германи çарĕн тĕп вăйĕсене тытса тăрать. Кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Хĕвелтухăç фронтĕнче тăшманăн 220 дивизи пулнă, вĕсенчен 200 дивизийĕ—нимĕçсен. Ку япала ĕнтĕ Хĕвелтухăç фрончĕ гитлеровецсемшĕн татса паракан фронт пулнине, çавăн пирки те унтан вĕсем хăйсен çарĕсен пĕчĕк пайне те пулин илме пултарайманнине пĕлтерет. Ку çеç те мар, çак фронта пĕрмаях çĕнĕ вăйсем хушса пама тивет. Хĕвеланăçĕнчи оборона валли нимĕçсем, пăтамран шутласан, 75 дивизи тытса тăраççĕ. Анчах кун чухлĕ вăй союзниксем хĕскине хирĕç тăма çитмест. Çавăнпа та вăл вăйсем союзлă çарсем пуçласа ярас пысăк наступление тытса чарма пултараймаççĕ. Хĕвеланăçĕнче нимĕçсен (ăна ĕнтĕ вĕсем хăйсем те йышăнаççĕ) стратегиллĕ резервсене хутшăнтармасăрах çапăçмалла пулать. Кун сăлтавĕ паллах: резервсем çук, нимĕçле мобилизаци те тăшмана çăлса хăварма пултараймасть.

* * *

Лăпкă океан çинчи вăрçă хăвăртлăх енчен те, анлăшĕ енчен те ӳссех пырать. Англипе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем ăнăçлă контрнаступлени тунине пула, японецсем, стратегиллĕ паха позицисене çухатса, оборонăна куçнă. Халĕ чи паллă çапăçу—Филиппины утравĕсемшĕн пыракан çапăçу. Вăл çапăçу октябрĕн вĕçĕнче Лейте утравĕ çинче пуçланса кайнă. Филиппин утравĕсем Япони оборонинче паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Японецсем кунта пысăк вăйсем илсе пынă. Филиппин районĕнче тинĕсре пĕр пысăк çапăçу пулса иртнĕ ĕнтĕ, вăл çапăçура Япони флочĕ поражени тӳснĕ. Лейте утравĕ çинче, ют çĕршыв хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, японецсен çĕр çинчи чылай пысăк çарĕсем пур, вĕсен шучĕ 225.000 çынна çитет. Союзниксен командованийĕ те унта çĕнĕ вăйсем ярсах тăрать. Çакă вăл, паллах, çапăçăва хаярлатса пырать.

Лăпкă океан çинче çакăн пек условисем пулса тухни çумне Англире Лăпкă океана ăсатма çĕнĕ флот туни çинчен тата ăна Инçетри Хĕвелтухăçне ăсатасси çинчен пĕлтерни интереслă хыпар пулса тăрать. Çав флот Австрали таврашĕнче пулмалла. Паллах ĕнтĕ, унта мĕн чухлĕ карап пуласси çинчен пĕлтермеççĕ. Анчах та çакă паллă: вăл флот шутĕнче тĕрлĕ карапсем —вăл шутра пысăк карапсем те—пулмалла.

Çакна та астăвас пулать: Хĕвелтухăçĕнче халĕ Англин Индири флочĕ пур. Вăл Индипе Лăпкă океан чиккинче тăрать.

Англи адмиралтействи Лăпкă океанра тинĕс-çар вăйĕсем питĕ нумай пухса тăратни вăл районра пысăк событисем пулмаллине пĕлтерет. Çакна та асăрхас пулать: Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар вăйĕсем хăйсем кăна та Япони вăйĕсенчен ытларах. Англипе Америка тăшмантан темиçе хут вăйлăрах пуласшăн тăрăшни курăнать. Ку ĕнтĕ тинĕс-çар вăйĕсем енĕпе çеç мар, ытти вăйсем енĕпе те çавăн пекех пулмалла. Лăпкă океан çинче пысăк тата татăклă çапăçусем пулас вăхăт çывхарса килет.

Я. ВИКТОРОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем халĕ Рур шывĕн пĕтĕм сулахай енне, вăл Инде шывĕпе пĕрлешнĕ тĕлтен пуçласа, Дюренран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăракан пункт патне çитиччченех, хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Нимĕçсем Шопховен çывăхĕнчи замокра тата Мариавейлертан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри завод çуртĕнче çеç хирĕç тăраççĕ. Дюренран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен чăçĕсем Гюрцених патне çитсе Гейран хĕвелтухăçнелле çур миля таранччен малалла кайнă. Кестерних хулинче çапăçусем пыраççĕ.

Саар шывĕн айлăмĕнче, Сааргемюнд çывăхĕнче, союзниксен çарĕсем Хабкирхенран хĕвелтухăçнерехре Блис шывĕ урлă каçнă та Германие кĕрсе кайнă.

Эльзасăн çурçĕр пайĕнче союзниксен çарĕсем çурçĕр енче ултă миля таран малалла кайнă, чикĕ хĕрринчи Висамбур хулинчен икĕ мильăра тăракан пункт патне çитнĕ. Çак районта, çавăн пекех тата Рейнăн хĕвеланăç енче, 12 ял ытла тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Рейн юххипе анаталла малалла кайнă, хальхи вăхăтра вĕсем Францине Германи чиккинчен пĕр мильăран та çывăхрах вырăнта, Лаутербург таврашĕнче тăраççĕ.

Вăтам бомбардировщиксем Висембур хулинчен çурçĕртерехре Зигфрид линийĕ çинчи оборона сооруженийĕсене тапăннă.

Истребитель-бомбардировщиксем Ландаури сортировка станцийĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Рейн шывĕн тури пайĕнче паровозсемпе вагонсем çине бомбăсем пăрахнă.

Эльзас тӳремĕнче, Страсбургран кăнтăртарахра, союзниксен чăçĕсем Рейн еннелле пĕр-икĕ миля малалла кайнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире, Равенна хулинчен хĕвеланăçнерехри районра, хаяр çапăçусем пыраççĕ. Канада çарĕсем, тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Баньякаваллăран çурçĕртерехре канал çинче тăшмана тапăнмалли укреплени тунă. 5-мĕш армири Англи чăçĕсем Тоссиньяно тата Борго Тоссиньяно ялĕсенчен тăшмана хăваласа кăлараççĕ. 5-мĕш арми фрончĕн ытти участокĕнче нимĕнле паллă улшăну та пулман.

АМЕРИКĂН 650 БОМБАРДИРОВЩИКĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши 650 бомбардировщикĕ ытла Ганновер тата Кассель районĕнчи (Германири) чугун çул объекчĕсене тапăннă.

ГИТЛЕРЛА ХАÇАТ «ХĂРУШĂ КАЛАÇУСЕМПЕ» КĔРЕШМЕ ЧĔНЕТ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Дрезденер цейтунг» ятлă гитлерла хаçат декабрĕн пуçламăшĕнче умстатья пичетлесе кăларнă. Вăл статья Германире пораженилле шухăшсем ӳссе пыни çинчен питех те лайăх каласа парать. Статья авторĕ подполковник Элленбек «хăрушă сăмахсем» калаçакан «ухмах нимĕçсене» ятлать.

Элленбек çырнă тăрăх, Германи халăхĕ Германи çарĕ поражени тӳсесси çинчен ытларах та ытларах шухăшлать, нимĕçсем вăрçă епле пĕтессинчен вилĕмрен хăранă пекех хăраççĕ. Вăçĕмсĕр черетсенче тăракан пиншер мюллерсемпе шульцсем Германи фрончĕсем çинчен официальнă паракан пĕлтерӳсем тĕрĕс марри çинчен калаççĕ, тет Элленбек.

Çапла калаçакансене подполковник Элленбек отпор пама чĕнет. Ун шучĕпе, вĕсене куçран вут сирпĕнмелле çапмалла. Çавăн йышши «ухмах нимĕçсене» автор арестлесе гестапо аллине пама хушать.

Грецири лару-тăру

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Лондонри радио çакăн çинчен пĕлтернĕ: союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи главнăй штабĕ çумĕнчи Англи министр-резиденчĕ ĕнер Греци премьер-министрĕпе икĕ хут канашланă. Афины хулинче тата Салоникăра пуçланса кайнă пĕтĕмĕшле забастовка халĕ Грецири пысăк хуласенче нумайĕшĕнче сарăлса кайнă. Енер кăнтăрла Афины хулинче вăхăтлăха пулнă лăпкăлăх пĕтнĕ те хула варринче партизансем каллех çапăçма пуçланă. Италирен самолетсемпе Англи çарĕсем валли пысăк пулăшу пырса çитнĕ. Афины хули варрине пыракан нумай урамсенче Англи çарĕсем пралуксем карса хунă. Граждансла халăх урамсенче талăкра та икĕ сехет хушши анчах пулма пултарни çинчен калакан приказ партизансен çарĕсене пулăшма столицăна çĕнĕ вăйсем тата хĕçпăшал илсе пыма чарĕ, тесе шутлаççĕ.

Люблинра пулса иртнĕ йышлă митинг

ЛЮБЛИН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитереймен). Паян Люблинра профсоюзсен Люблинри совечĕ пухнипе хулари ĕç халăхĕн 20.000 çынлă митингĕ пухăннă. Кăнтăрла 12 сехет тĕлне площаде рабочисен, служащисен, вĕренекенсен йышлă колоннисем, çавăн пекех Бяла-Подляска, Грубешув, Замостье, Седлец, Томашув, Хелм хулисенчи профсоюзсен делегацийĕсем пырса çитнĕ.

Митинга Люблинри профсоюзсен комиссийĕн председателĕ Мариан Червинский уçнă.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: «Стронництво Людовен» Главнăй Совечĕн Председателĕн заместителĕ Ян Чеховский, Польшăри рабочи партин (ППР) секретарĕ Веслав, Польшăри Социалистсен партийĕн Главнăй Совечĕн Председателĕ доктор Болеслав Дробнер тата «Стронництво Демократичне» парти ячĕпе Леон Хайц. Вĕсем пурте Польша Халăхĕн Комитетĕнчен Польша республикин Вăхăтлăх правительствине туса хума халăх ыйтнине хапăл туса йышăннă.

Митингра пулнисем пĕрсаслăн йышăннă резолюцире Польша Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ ертсе пынипе Польша халăхĕ тунă çитĕнӳсене палăртнă.

Çакăнта пухăннисем, — тенĕ резолюцире, — Польшăн реакциллĕ, вăрттăн вĕлерекен тата Гитлера пулăшакан Арцышевский—Квапинский шайккине халăх тăшманĕ тесе питлеççĕ». «Халăх, — тенĕ резолюцире малалла, — СССР-па союз тытакан правительство çеç ун ячĕпе калаçма пултарать тесе шутлать. Совет Союзĕ ĕнтĕ пирĕн çĕр çинче гитлерла Германие аркатса пырать, пире ирĕклĕх парать. Вăл пире хĕвеланăçĕнчи союзлă государствăсемпе туслă пурăнтарасшăн, вăл Хĕвелтухăç Пруссие Польшăна илсе пама пултарать, вăл пирĕн чикĕсене Одер шывĕпе Нейсс çинче тума пултарать. Митинга пухăннисем Люблин хулинчи профсоюзсен советне Польша Халăхĕн Советне делегаци яма, парламента çак резолюцие пама, унтан вăхăтлăх правительство тума ыйтма хушаççĕ. Вăл правительство—Польша демократийĕн правительстви, Германие çĕнтерекен правительство пулса тăмалла».

БОНОМИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ÇИНЕ МĔНЛЕ ПĂХАССИ ÇИНЧЕН АНГЛИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИ КАЛАНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви декабрĕн 14-мĕшĕнче каçхине çапла каланă:

«Италире нумаях пулмасть пулса иртнĕ политикăллă кризис вăхăтĕнче (халĕ унта çĕнĕ правительство туса хунă, ăна синьор Бономи ертсе пырать) Англипе Америкăн Римри посолĕсем пĕр-пĕринпе тăтăшах канашланă. Икĕ посолăн доклачĕсемпе вĕсен правительствисем килĕшнĕ. Унăн величествин правительстви тата Америка правительстви, çак ыйту çине пĕр пекех пăхаканскерсем, хăйсен посолĕсене çапла пĕлтернĕ: эпир çĕнĕ правительствăна представительство йĕркипе тунине тата вăл ĕçлеме пуçланине ырлатпăр, тенĕ.

ФРАНЦУЗСЕН «ЭР ФРАНС» ЯТЛА АВИАКОМПАНИНЕ КОНФИСКАЦИЛЕНИ

БРАЗЗАВИЛЬ, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильри радио пĕлтернĕ тăрăх, Францин авиаци министрĕ Тийон французсен «Эр франс» ятлă компанине конфискацилени çинчен тата çав компанин административнăй совет членĕсене арестлени çинчен пĕлтерет. Вĕсене оккупаци вăхăтĕнче компанин предприятийĕсенче тунă самолетсемпе моторсене нимĕç çарне тăратнăшăн айăплаççĕ.

НИМĔÇ ХĂВАЛАСА КАЙНА ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХЕ НИКОЛАЕВ ОБЛАÇНЕ ТАВĂРСА ПАРАÇÇĔ

Николаев облаçĕнчи районсене Хĕрлĕ Çар нимĕçсенчен каялла тытса илнĕ выльăх-чĕрлĕхе тавăрса параççĕ. Варваровски тата Тилигуло-Березански районсене пĕрремĕш ушкăн выльăх çитнĕ те ĕнтĕ. Выльăхсене каялла хăваласа килме Измаил облаçне 300 колхозник тухса кайнă.

(ТАСС).

А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарать

1945 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче вырăсен аслă писателĕ Александр Сергеевич Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарать. Çавна паллă тăвас шутпа СССР Совнаркомĕ Пĕтĕм Союзри Комитет тунă. Вăл комитета çаксем кĕреççĕ: Л. М. Леонов (председатель), Л. С. Соболев (председатель заместителĕ), И. Барбарус (Варес), Самед Вургун, А. М. Герасимов, Гафур Гулям, А. Н. Еголин, В. В. Иванов, А. С. Исаакян, В. И. Качалов, А. Е. Корнейчук, Е. Е. Лансере, Г. Н. Леонидзе, И. Т. Лыньков, Н. А. Михайлов, И. М. Москвин, С. П. Обнорский, Н. К. Пиксанов, Д. А. Поликарпов, В. П. Потемкин, В. И. Пудовкин, П. М. Садовский, Н. И. Собольщиков-Самарин, А. Т. Твардовский, Н. С. Тихонов, А. Н. Толстой, К. А. Тренев, А. М. Упиц, Н. Б. Храпченко, С. И. Чиковани, В. Ф. Шишмарев, Ю. М. Юрьев, А. А. Яблочкина.

Комитета А. С. Грибоедов ятне ĕмĕрлĕхе палăртса хăвармалли мероприятисене хатĕрлеме тата Совет Союзĕнчи ĕçхалăхне А. С. Грибоедовăн творчествипе паллаштарма хушнă.

Ача амăшĕ - героиня патĕнче

«Хĕвелсĕр çеçкесем те чечекленмеççĕ, юратусăр телей çук, хĕрарăмсăр юрату çук, ача амăш-хĕрарăмсăр—поэт та, герой та çук».
М. ГОРЬКИЙ.



«Сталинцы» колхоз членĕсен йĕркипе ларса тухнă пӳрчĕсем хушшинче Евдокия Ефимовнăпа Александр Кондратьевич çемьи пурăнакан пӳрт, урамран пăхсан, пĕр тимĕр витнипе кăна уйăрăлса тăрать. Çак пӳртре ĕнтĕ 10 ача çуралса çитĕннĕ. Çак пӳртре вуннăшĕнчен кашниех çыншăн чи çывăх тата ĕмĕрлĕхе чĕре çумĕнче юлакан «анне» сăмаха кăкăр сĕтне çинĕ чухнех калама вĕренсе ӳснĕ.

Ача амăшĕ-героиня çемьи пурăнакан пӳрте шалтан пăхсан, унта культурăллă çынсем пурăннине туйса илетĕн. Çулпуçăн тата пирĕн халăх историйĕнчи паллă çынсен портречĕсем, ача амăшĕ-героиня суратса çитĕнтернĕ ачасен кантăк айне юратса вырнаçтарнă фотоӳкерчĕкĕсем, çӳлĕк çине йĕркеллĕн купаланă тĕрлĕ кĕнекесем, хĕллехи кун ешĕрсе çуллахи вăхăта аса илтерекен чечексем.

Пӳрт пысăках мар, анчах, Евдокия Ефимовна каланă тăрăх, çуллахи вăхăтра, ачасем пурте тĕрлĕ шкулсенчен яла тавăрăннă чухне, çемье шучĕ 16 çынна çитнĕ пулсан та, унта тăвăр пулман. Пӳртĕн кашни кĕтесĕнче тасалăх та йĕркелĕх хуçа пулса тăрать.

Анне! Мĕн тери çывăх, мĕн тери ачаш та хаклă çак сăмах, çыннăн чи юратакан сăмахĕ! 1910 çулта Евдокия Ефимовнăн малтанхи ачи—Ирина, çак пӳртре çуралса, чи малтан «анне» текен сăмаха çамрăк кăкăрĕнчен çыхăнусăр кăларса, калаçма вĕреннĕ, майĕпен çитĕнсе, пурнăç çулĕ çине çирĕппĕн тăнă. Ашшĕпе амăшĕ уншăн вĕçĕмсĕр тăрăшнипе вăл, нумай йывăрлăхсене çĕнтерсе, аслă шкултан вĕренсе тухнă. Хăйĕн шăллĕсемпе йăмăкĕсене мĕнле çулпа каймаллине кăтартса панă. Ирина Александровна çак пӳртре иртнĕ çуллă амăшĕпе пĕрле, Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрса тăшмана хирĕç çапăçакан хăйĕн упăшки — врач патне хумханса çыру çырнă:

«Эсĕ хăвах пĕлетĕн, эпĕ 12 çул хушши совет шкулĕнче ĕçлетĕп. 13-мĕш çулĕнче мана пысăк хисеп турĕç. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илме тивĕç пултăм. Çак пысăк наградăшăн хĕпĕртенине пĕлтерсе, сана, фронтра тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн кĕрешекен çывăх юлташăма, манпа пĕрле хĕпĕртеме чĕнетĕп. Правительствăн пысăк хисепне тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе ответлеме сăмах паратăп. Хамăн пĕтĕм вăй-халăма, пĕлĕвĕме çамрăк ăрăва вĕрентес ĕçе хурăп...»

Ирина Александровнăн Левăпа Гера ятлă пĕчĕк ачисем ашшĕ патне каякан амăш çырăвĕ çине тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсемпе Хĕрлĕ Çăлтăр ӳкерсе ăшшăн саламланă.

Евдокия Ефимовна 58 çулта. Патша саманинче вăл «шкул алăкĕн хăлăпне те тытса курман». Анчах Совет влаçĕ ăна кĕнеке çине çырнă ăслăлăха вĕренме май панă, вăл ликпунктра вĕренсе тухнă. Уяр кунхи пĕлĕт пек кăвак куçĕсем çине куçлăх тăхăнса, хĕрĕн ăшă çырăвне вуласа тухнă. Иринăпа пĕрле савăннă. Стена çумĕнче çакăнса тăракан Ленинпа Сталин портречĕсем çине пăхса, вĕсене ăшшăн тав тунă.

Евдокия Ефимовна хăйĕн ачисем çинчен каланă чух яланах вĕсен фотоӳкерчĕкĕсене кăтартма юратать.

Акă уçă кăмăллă, анчах яланах шухăшлă ывăлĕ Георгий. Вăл Хусан Университетĕнче вĕренсе тухнă. Вăтам шкул директорĕ пулса ĕçленĕ. Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем Тăван çĕршыв çине килсе тапăнсан, вăл лăпкă шкулта текех ĕçлеме пултарайман, тăшманпа çапăçма фронта тухса кайнă. Георгий Александрович тăван çĕршыва, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, анне тесе, пĕтĕм чĕререн юратнă, тăшмана курайман. Фронтра вăл хăюллă та паттăр пулнă. Правительство ăна çавăншăн орденпа наградăланă.

Ача амăшĕ-героиня хăйĕн ытти ачисемпе паллаштарать. Христофор, 30 çулта, халĕ Именевăри вăтам шкул директорĕнче ĕçлет.

— Тепĕр ӳкерчĕк кăтартмалли пур-ха,— тет Евдокия Ефимовна.—Ку ман хĕрĕм—Екатерина, хамăр ялти çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ, унпа юнашарри—унăн упăшки, вăл халь фронтра.

Эпир пăхакан ӳкерчĕк çинче çар тумĕ тăхăннă майор, унăн кăкăрĕ çинче «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ курăнса тăрать.

Петр Александрович—Ефимовнăн 1919 çулта çуралнă ывăлĕ. Вăл вăрçă пуçлансан фронта тухса кайнă. Лейтенант, вăл хăйне пăхăнса тăракан воинсене сахал мар çапăçăва ертсе кĕнĕ. Анчах вăрçă, уйрăмăнах нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан вăрçă, хаяр та шелсĕр... Лейтенант Александров нумай вăхăт хушши ĕнтĕ амăшĕ патне ăшă сăмахлă çырусем çырма чарăннă...

Мария — йăваш, нумай калаçма юратман ĕçчен хĕр. Вăл та çамрăк ăрăва ăстăн парас ĕçре—учительница пулса ĕçлет.

— Елена, ытти ачасем пек, шкулта ĕçлеме шут тумарĕ,—тет Евдокия Ефимовна. Вăл халăх сывлăхне сыхлас ĕçе ытларах юратнă. Халь вăл Хусанти медицина институтĕнче вĕренет.

— А ку Миша, манăн ывăлăм. Вăл Хусанта вĕренет, — тет героиня. Вăл вĕçен-кайăксем пек çӳлте вĕçекен тата пĕлĕтри лăпкăлăхра кĕрлесе вĕçекен самолетсем тума вĕренет. Мишăн пултарулăхĕ унта çеç мар. Вăл художник. Чăн та, сăн ӳкерессине вăл хăйĕн специальноçĕ тесе шутламасть, çапах та, хăй юратакан çынсен сăнĕсене пысăк мастерлăхпа сăрлать. Стена çинче çакăнса тăракан Ленин тата Сталин сăнĕсене Миша чĕререн юратса сăрланă. Вĕсене Çавалхĕрри Кăнашра ӳкернĕ темĕ никам та пултараймасть.

Евдокия Ефимовна Кубанка тăхăннă, хăйĕн хĕçне аврипчен тытса тăракан В. И. Чапаев полководец ӳкерчĕкне кăтартать. — Кăна та Миша тунă, — тет вăл. Тепĕр енче — вырăссен аслă поэчĕ М. Ю. Лермонтов сăнĕ, вăл шухăшлă куçĕсемпе мухтава тивĕç çемье çине пăхса тăрать. Миша мĕн çамрăкранах Лермонтов сăввисене юратнă. Лермонтова вăл пысăк ăсталăхпа ӳкернĕ.

«Сталинцы» колхоз председателĕ Захаров юлташ Евдокия Ефимовнăн чи кĕçĕн ачисемпе калаçать.

Ванюк — улттăмĕш класра вĕренекен отличник. Унăн йăмăкĕ—12 çулти Нина 5-мĕш класра вĕренет.

* * *

Ача амăшĕ-героиня Евдокия Ефимовна хăйĕн ачисемпе мухтанать, ачисем те амăшĕпе тивĕçлипе мухтанаççĕ. Анчах та Ефимовнăн пурнăçĕ çăмăллах пулман. Вĕсем çак çутă та анлă пӳрте Совет влаçĕ вăхăтĕнче кăна лартнă.

Александр Кондратьевичăн ашшĕ чухăн çын пулнă, уйрăлса тухнă ывăлне нимĕн те паман. Евдокия Ефимовна калашле, «пĕр шалçа та паман», пĕтĕмпех хăйсем тар юхтарса тунă. Ĕлĕкхине аса илсе, Евдокия Ефимовна, вăрăмăн сывласа, çапла калать:

— Совет влаçĕ, Ленин-Сталин партийĕ пире çын турĕç. Ĕлĕкхи саманара пулсан, эпир 10 ача ӳстерес çук. Çитĕннĕ пулсан та, вĕсем е пуянсем патĕнче тарçăра е ял кĕтӳçинче асапланса, хăйсен ĕмĕрне иртернĕ пулĕччĕç. Мана Ача амăшĕ-героиня ятне панăшăн эпĕ пĕтĕм чĕререн Сталин юлташа тав тăватăп, пирĕн халăх ырлăхĕшĕн, çĕршыв чыслăхĕпе мухтавĕшĕн нумай-нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунатăп.

Пирĕн çĕршыва тăватă учитель, пĕр медик, пĕр авиатор, икĕ фронтовик çитĕнтерсе панă тата икĕ ачине пурнăç çулĕ çине кăларма хатĕрлекен аннене — Евдокия Ефимовнăна тăван çĕршыв Ача амăшĕ-героиня ятне парса хисеплерĕ тата чыс турĕ.

Чыс та мухтав Ача амăшĕ-героиня ятне илнĕ Евдокия Ефимовна Ефимова юлташа!

В. ЯСТРЕБОВ.
П. ПАВЛОВ.

Çĕрпӳ районĕ, «Сталинцы» колхоз.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Вăрман сыхлас ĕç управленине Шупашкарта ĕçлеме лесоводсем, экономист, плановик, бухгалтер, шофер тата ОРС работникĕсем кирлĕ. Ĕçукçи—калаçса татăлнă тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 36. Тел.—7—25.

Шупашкарти энергетика техникумĕнче техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе экзамен пама юрать.

Экзаменсене çак специальноçсемпе памалла: а) ЦЭС-сенчи дизель установкисем, б) ЦЭС-ăн теплотехника пайĕ, в) çурт-йĕрсемпе усă курасси.

Экстернат йĕркипе экзамен пама вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене тата производствăра çав специальноçпа икĕ çултан кая мар ĕçленисене пурне те йышăнаççĕ.

Заявленисене çак адреспа памалла: гор. Чебоксары, ул Плеханова, 7. Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: а) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, б) кадрсене учета илмелли листок, в) икĕ фотоӳкерчĕк.

Заявленисене çулталăкĕпех йышăнаççĕ. 3—1.

Шупашкарти трубăсем тасатакан бюрона труба тасатакан арçынсемпе хĕрарăмсем кирлĕ. Ĕç укçине ĕç тăрăх тӳлеççĕ, супăнь параççĕ, столовăй çумне çирĕплетеççĕ, хваттер параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная Площадь, 33.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04263 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.